*И.В. ОЛЕНКИНА*

# ЧӐВАШ ЭЛЧИ
## (П.Н. Чичканов çуралнӑранпа 80 çул çитнӗ май)

Çут çанталӑк П.Н. Чичканова иксӗлми пултарулӑх парнеленӗ. Вӑл ӳнерçӗ те, çыравçӑ та. Петр Николаевич çуралнӑранпа 80 çул çитнине республикӑра анлӑ уявларӗç. К.В. Иванов ячӗллӗ Литература музейӗнче те уяв касӗ иртрӗ.

Пирӗн ентешӗмӗр 1922 çулта утӑ уйӑхӗн 7-мӗшӗнче Канаш районӗнчи Янманкасси ялӗнче çуралнӑ. Ялти çичӗ çул вӗренмелли шкула пӗтерсен вӑл Улатӑрти художество училищине вӗренме кӗнӗ. Ун хыççӑн Шупашкарти художество училищине куçма тивнӗ. 1942 çулта Петр Николаевич çара каять. Вӑрçӑ хыççӑн пӗр хушӑ çар хаçатӗнче ӗçлет. 1950 çултанпа Киев хулинче пурӑнать. 1983 çулччен «Украина» журналта тӗп ӳнерçӗ пулса вӑй хунӑ.

П.Н. Чичкановӑн 1935 çултах пӗрремӗш очеркӗсем, сӑввисем, фельетонӗсем республикӑри хаçат-журналсенче пичетленнӗ. Çак çултан пуçланнӑ та ӗнтӗ унӑн литература анинче тӑрӑшасси. Петр Николаевич Киевра пурӑнни, чӑвашпа унти халӑха çывӑхлатас ӗмӗтпе кунне-çӗрне пӗлмесӗр тенӗ пекех ӗçлени ырӑ сӑмаха тӑннипех тивӗçлӗ. Ӑна эпир Украинӑри чӑваш элчи тетпӗр. Вӑл чӑваш литературипе культурине украин халӑхӗ хушшине сарма тӑрӑшать. «Украина» журналта ӗçленӗ вӑхӑтрах П.Н. Чичканов чӑваш тата унти çыравçӑсен кӗнекисене час-часах илемлетсе панӑ. Ю. Збанацкин «Çеçпӗл» романне, П. Хусанкайӑн «Салам сана, Украина» кӗнекине, «Çеçпӗл кӑмӑлне» ятлӑ сӑвӑсен пуххине тата ытти чылай кӗнекесене те вӑлах ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ.

П.Н. Чичканов Украина çӗрне тӑван ен пекех килӗштерет. Акӑ мӗнле çырать вӑл Украина çӗрӗ çинчен: «Эпӗ Чӑваш ен ывӑлӗ, анчах санпа яланлӑхах тӑванлашрӑм, Украина çӗрӗ-шывӗ».

Çыравçӑн литературӑри сумлӑ ӗçӗ-хӗлӗ ятарлӑ тӗпчеве тивӗçлӗ. Киев хулинче пурӑнма пуçланӑранпах П.Н. Чичканов Çеçпӗл Мишшин пурнӑçӗпе еткерлӗхне тӗпчет. Виçӗ пысӑк хайлав пичетлесе кӑларать: «Кӑвар чӗре», «Çӗн Кун ачи», «Сенкер Десна». Çав документсене тӗпе хурса çырнӑ та хӑйӗн романне паллӑ украин çыравçи Юрий Збанацкий.

Петр Николаевич украин литературин классикӗсен И. Котляревскин, Т. Шевченкӑн, П. Тычинӑн тата ыттисен хайлавӗсене куçарса кӑларни те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Çавӑн пекех К. Иванов, Çеçпӗл Мишши, П. Хусанкай кӗнекисем украинла тухасси те, культура çыхӑнӑвӗсене паянхи шая çӗклесси те чи малтанах П.Н. Чичканов ӗçӗ-хӗлӗпе çыхӑннӑ. Вӑл Украина çӗрӗнче Çеçпӗл ятне вилӗмсӗрлӗх кӳрес ӗçе мӗн ӗмӗр тӑршшӗпех чун хавалӗпе туса пырать.

П.Н. Чичканов «Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ художникӗ», «Украина республикин культурӑн тава тивӗçлӗ ӗçченӗ» ятсене тивӗçнӗ. 2002 çулта Çеçпӗл Мишши фончӗ ӑна Çеçпӗл Мишши ячӗллӗ премие парса чысларӗ.

Маларах каларӑмӑр ӗнтӗ, К.В. Иванов ячӗллӗ Литература музейӗнче П.Н. Чичкановӑн юбилей касӗ иртрӗ. Кунта унӑн пурнӑçӗпе ӗçӗ-хӗлне сӑнлакан курав йӗркеленӗ. Юбиляра Чӑваш Республикин культура тата национальноçсен ӗçӗсен министрӗн çумӗ М.Н. Краснов, Чӑваш Республикин профессионал писательсен союзӗн ертӳçи В. Туркай, Чӑваш халӑх поэчӗсем Ю. Семнетер, Г. Ефимов, çыравçӑсемпе ӳнерçӗсем, тус-юлташӗсем саламларӗç, унӑн пултарулӑхне пысӑка хурса хакларӗç.

П.Н. Чичканов музей фондне хӑй усӑ курнӑ япаласене, сӑн ӳкерчӗксене, «Украина» журнал номерӗсене парнелерӗ. Çавӑн пекех Çеçпӗл Мишши çинчен тӗрлӗ паха материал парса фонда пуянлатрӗ. Унӑн ӗçӗсем, ун çинчен çырнӑ паха материалсем Чӑваш наци музейӗн фондӗнче тирпейлӗн упранаççӗ.